Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

58 (8019) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи ҫурла (август) уйӑхӗн 1-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Туслӑ ҫемье – йышлӑ ҫемье



***«Ҫемьере пӗр ача – пӗр савӑнӑҫ, виҫӗ ача – виҫӗ савӑнӑҫ», – тесе ахальтен каламаҫҫӗ. Хорнуй ял тӑрӑхне кӗрекен Шаптак ялӗнче пурӑнакан Ларисӑпа Александр Александровсен ҫемье телейӗсем виҫҫӗн. Лариса Венальевна Тойкилтӗри фельдшерпа акушер пунктӗнче санитаркӑра тӑрӑшать, Александр Владимирович вара «Путь Ильича» агрофирма» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра тракторист пулса ӗҫлет.***

***Ҫемьере виҫҫӗмӗш ача ҫуралнӑ май вӗсем республикӑри ача амӑшӗн капиталӗн сертификатне, парнесене тивӗҫрӗҫ. Сӑмах май вӗсен халӗ ҫурт-йӗр ҫавӑрма ҫӗр лаптӑкӗ тӳлевсӗр илме те май ҫуралчӗ.***

***Сӑн ӳкерчӗкре: Александровсен телейлӗ ҫемйи.***

**В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## «Ӗҫ ветеранӗ» ят илме пултаракансем йышланӗҫ

**Республикӑра**

Июлӗн 25-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Правительствин ларӑвӗ иртнӗ. «Ӗҫ ветеранӗ» ят илме май паракан СССР, РСФСР, Раҫҫей Федерацийӗн влаҫ органӗсен ӗҫре палӑрнӑшӑн панӑ ведомство знакӗсен переченне тата 14 ведомство знакӗ кӗртнӗ.

**«Медальсем» пайра ҫак позицисене хушнӑ:**

– Раҫҫей Федерацийӗн Гражданла оборона, чрезвычайлӑ лару-тӑру тата ҫанталӑк инкекӗсене пӗтерессин министерствин «За содружество во имя спасения»;

– Раҫҫей Федерацийӗн Оборона министерствин I, II степень «За воинскую доблесть»;

– Раҫҫей Федерацийӗн Ҫыхӑну тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин I, II, III степень «За выслугу лет»;

– Патшалӑх статистикин федераллӑ службин «За заслуги в проведении Всероссийской переписи населения 2010 года»;

– Наказанисене пурнӑҫлаттаракан федераллӑ службӑн I, II, III степень «За службу»;

– Раҫҫей Федерацийӗн вӗрентӳ тата наука министерствин «К.Д. Ушинского».

**«Хисеплӗ ятсем» пайра ҫак позицисене хушнӑ:**

– СССР Ҫыхӑну министерствин тата ҫыхӑну ӗҫченӗсен профсоюзӗн Тӗп Комитечӗн I, II, III степень «За работу без аварий»;

– Раҫҫей Федерацийӗн Вӗрентӳ тата наука министерствин «Почетный работник среднего профессионального образования Российской Федерации»;

– Раҫҫей Федерацийӗн Вӗрентӳ тата наука министерствин «Почетный работник высшего профессионального образования Российской Федерации»;

– Раҫҫей Федерацийӗн Вӗрентӳ тата наука министерствин «Почетный работник науки и техники Российской Федерации»;

– Раҫҫей Федерацийӗн промышленноҫ тата энергетика министерствин «Почетный строитель России».

**«Кӑкӑр ҫине ҫакмалли знаксем, значоксем» пайра ҫак позицисене хушнӑ:**

– Раҫҫей Федерацийӗн Вӗрентӳ тата наука министерствин «За развитие научно-исследовательской работы студентов»;

– СССР Министрсен Канашӗ ҫумӗнчи Патшалӑх хӑрушсӑрлӑх комитечӗн «Отличный пограничник»;

– Патшалӑх резервӗсен федераллӑ агентствин «Почетный работник государственного резерва России».

**ЧР Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерстви.**

**Вырма – 2012**

## 4 хуҫалӑхра тырӑ выраҫҫӗ

Районти хуҫалӑхсенче вырма ӗҫӗсем пуҫӑнчӗҫ темелле. Ӗнерхи кун тӗлне 4 хуҫалӑхра хӑйсен «хир карапӗсене» тӗш тырӑ пуссисене илсе тухнӑ. «Восток» хуҫалӑхра 23 гектар кӗрхи тулӑ, 10 гектар ыраш, Ильич яч. хис. хуҫалӑхра 10 гектар кӗрхи тулӑ, Суворов яч. хис. хуҫалӑхра 105 гектар кӗрхи тулӑ, «Колос» агрофирмӑра 10 гектар кӗрхи тулӑ вырса ҫапнӑ. Ҫак кунсенче ытти хуҫалӑхсенче те вырма ӗҫӗсем тытӑнмалла.

Ҫанталӑк май панипе усӑ курса тӗш тырӑна тӳрремӗн вырса ҫапаҫҫӗ. Малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх Суворов яч. хис. хуҫалӑхра тӗш тырӑ тухӑҫӗ пӗр гектар пуҫне вӑтамран 15,5 центнерпа танлашать.

Кунпа пӗрлех выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫсем те чарӑнмаҫҫӗ. Нумай ҫул ӳсекен курӑксене 6154 гектар (92 процент), пӗр ҫул ӳсекен курӑксене 983 гектар (56 процент) ҫулнӑ, утӑ 4949 тонна (90 процент), сенаж 12873 тонна (76 процент), силос 3765 тонна (20 процент) янтӑланӑ.

**Пӗрлехи сасӑлав кунӗ**

## Суйлав кампанийӗ пуҫланчӗ

2012 ҫулхи октябрӗн 14-мӗшӗ – республикӑра пӗрлехи сасӑлав кунӗ. Ҫав кун вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен хушма (вӑхӑт ҫитмесӗрех ирттерекен) суйлавӗ пулать. Пирӗн районта Муркаш, Чуманкасси тата Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене ҫӗнӗрен суйламалла.

Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене вӑхӑт ҫитмесӗрех суйласси пирки ял тӑрӑхӗсенчи халӑх суйлакан органсен йышӑнӑвӗсене 2012 ҫулхи июлӗн 26-мӗшӗнче «Вестник Моргаушского района» хаҫатра пичетлесе кӑларнӑ. Йышӑнусене официаллӑ пичетлесе кӑларнӑранпа кандидатсем тӑратмалли тапхӑр пуҫланчӗ. Вӑл сентябрӗн 3-мӗшӗччен пырать. Документсене Муркаш территори суйлав комиссийӗнче йышӑнаҫҫӗ. Комисси ӗҫ кунӗсенче 8 сехетрен тытӑнса 17 сехетчен ӗҫлет, шӑмат кун – 9 сехетрен тытӑнса 13 сехетчен, вырсарни кун – кану кунӗ. Ҫыхӑнмалли телефонсем: 62-6-47; 62-3-64.

Законодательствӑпа килӗшӳллӗн вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен 2012 ҫулхи октябрӗн 14-мӗшӗнчи суйлавӗнче Чӑваш Республикин Муркаш районӗн вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсене суйланма право пур тата Чӑваш Республикин территорийӗнче регистрациленӗ политика партийӗсен, вӗсен регионсенчи уйрӑмӗсемпе ытти структура подразделенийӗсен, пӗтӗм Раҫҫейри общеcтвӑлла пӗрлешӳсен тата ытти общеcтвӑлла пӗрлешӳсен списокне «Вестник Моргаушского района» хаҫатӑн 2012 ҫулхи июлӗн 28-мӗшӗнчи 40-мӗш номерӗнче пичетлесе кӑларнӑ, Муркаш районӗн сайтӗнче вырнаҫтарнӑ.

**Хамӑр инф.**

**Олимп вӑййисем**

## Чӑваш спортсменӗсем старта тухаҫҫӗ

Паянхи кун 20 ҫул каялла, 1992 ҫулхи августӑн 1-мӗшӗнче, Барселонӑри Олимп вӑййисенчи марафонра Валентина Егорова Олимп чемпионки пулса тӑнӑ. Вӑл вӑхӑтра ҫӑмӑл атлетикӑн ҫак йывӑр енӗпе – СССР-ти спортсменсенчен пӗрремӗш. Хӗрарӑмсен марафонне Олимп вӑййисен программине пӗррӗмӗш хут 1984 ҫулта Лос-Анджелесра иртекен Олимп вӑййисенче кӗртнӗ пулнӑ.

Ку эрнере вара Лондонра иртекен Олимпиадӑра старта чӑваш хӗрӗсем тухаҫҫӗ. Татьяна Архиповӑпа (Петрова) Альбина Майорова (Иванова) медальсемшӗн шӑпах марафонра тупӑшӗҫ. Вӗсем хутшӑнакан ӑмӑртӑва телевидени передачипе августӑн 5-мӗшӗнче 14 сехетре пӑхма пултаратӑр.

Ҫичӗ енлӗ кӗрешӳре вӑй виҫекен Кристина Савицкая хутшӑнакан ӑмӑртусене августӑн 3-мӗшӗнче 13.05 сехетре, 14.15 сехетре, 22.00 сехетре, 23.35 сехетре; августӑн 4-мӗшӗнче 13.05 сехетре, 14.40 сехетре, 15.55 сехетре, 23.35 сехетре телевиденипе сӑнама пултаратӑр.

Елена Наговицына августӑн 7-мӗшӗнче 5000 метрлӑ дистанцин суйлав ӑмӑртӑвӗнче (13.55 сехетре) вӑй виҫӗ. Ҫак ӑмӑртӑвӑн финалне августӑн 10-мӗшӗнче 23.05 сехетре пӑхма пултаратӑр.

Ирина Калентьева хутшӑнакан маунтинбайк, кросскантри ӑмӑртӑвӗ августӑн 11-мӗшӗнче 15.30 сехетре пуҫланать.

Чӑваш хӗрӗсемшӗн пулар!

**Хамӑр инф.**

**Раҫҫейре**

## ВТО-на августӑн 22-мӗшӗнче кӗретпӗр

РФ МИД представителӗ Александр Лукашевич пирӗн ҫӗр-шыв Пӗтӗм тӗнчери суту-илӳ организацине августӑн 22-мӗшӗнче кӗрессине пӗлтернӗ. Ҫакӑ Раҫҫейшӗн те, пирӗн партнерсемшӗн те усӑллӑ тенӗ вӑл.

Июлӗн 23-мӗшӗнче правительство ВТО секретариатне ҫак организацие кӗрессипе шалти процедурӑсене вӗҫленине пӗлтернӗ.

Раҫҫей ВТОна кӗни политика пӗлтерӗшлӗ пысӑк пулӑм шутланать. Ҫак клуб членӗ пулни пирӗн ҫӗршыва наци интересӗсене пур енлӗ хӳтӗлеме май памалла. Ҫапла палӑртнӑ асӑннӑ министерство представителӗ.

**ИТАР–ТАСС.**

**Республикӑра**

## Вырӑнти влаҫ тивӗҫӗ – халӑхшӑн тӑрӑшасси

Утӑ уйӑхӗн 26-мӗшӗнче Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев муниципалитетсен ертӳҫисемпе, районсемпе хуласен пуҫлӑхӗсемпе канашлу ирттернӗ. Унта республикӑн ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсен ертӳҫисем те хутшӑннӑ. «Муниципалитет влаҫӗ – халӑхшӑн чи ҫывӑххи. Пӗр-пӗр йывӑрлӑх сиксе тухсан ҫынсем чи малтан унран пулӑшу ыйтаҫҫӗ», – палӑртнӑ Михаил Игнатьев канашлу пуҫламӑшӗнче.

Михаил Игнатьев вырӑнти хӑй тытӑмлӑхӑн халӗ ӗҫлекен системи ҫинче чарӑнса тӑнӑ май хӑш-пӗр ҫӗрте муниципалитет йӗркеленӗвӗн пуҫлӑхӗпе сити-менеджер хушшинчи тавлашуллӑ самантсем сиксе тухни йӗркеллӗ пулӑм пулманнине палӑртнӑ.

Ҫӗр ыйтӑвӗ тӗлӗшпе те уҫҫӑнлӑх палӑрмасть. Ҫӗрпе усӑ курнӑшӑн аренда укҫи тӳлессипе ҫирӗп йӗрке ниҫтах та ҫук. Ку вара – вырӑнти бюджета пуянлатмалли мел.

Тепӗр ыйту – ялсенче кӑна мар, хуласенче те врачсемпе учительсем ҫитменни. Ҫамрӑк специалистсене пулӑшма патшалӑх енчен пулӑшу сумлӑ пулин те, тӗрлӗ сӑлтавпа вӗсем хӑйсен профессийӗпе ӗҫлесшӗн мар.

ЧР финанс министрӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Фарида Муратова районсемпе хуласен пӗрлештернӗ бюджечӗн тупӑш пайӗн ыйтӑвӗсемпе доклад тунӑ. Канашлура ЧР экономика министрӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Александр Быченков, ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Иван Моторин, ЧР строительство министрӗ Владимир Громов тухса каланӑ.

ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Павлов халӑхран сутӑн илекен сӗт хакӗ тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ пулнине палӑртнӑ. Хальхи вӑхӑтра ял ҫыннисенчен куллен 400 тоннӑна яхӑн сӗт пуҫтараҫҫӗ, вӑтамран пӗр килограмшӑн 7,5 – 9 тенкӗпе. Ҫав вӑхӑтрах 6 тенкӗпе пуҫтарнӑ тӗслӗхсем те пур. Кун пирки Михаил Игнатьев хӑйӗн тарӑхӑвне пытарман. «Пирӗн хамӑрӑн производительсене ӗҫлеме условисем туса панипе пӗрлех вӗсене хӳтӗлемелле те», – палӑртнӑ вӑл кун пирки.

Сергей Павлов сӗт туса илес тата ӑна вырнаҫтарас тӗлӗшпе ӗҫлекен ял хуҫалӑх организацийӗсемпе хушма хуҫалӑх тытакан граждансене хаксем чакса кайнӑ вӑхӑтра тӑкаксен пӗр пайне патшалӑх саплаштарма пулӑшассине аса илтернӗ, ҫак мел пирки ҫынсене вырӑнти влаҫӑн ӑнлантармаллине каланӑ.

**И. КЛЕМЕНТЬЕВА.**

## Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă аннене, хунямана – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Нина Васильевна ДИМИТРИЕВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Питĕ çинче яланах хаваслă кулă вылятăр. Эпир эсĕ пурришĕн питĕ савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Турри сана тата нумай-нумай çул пурăнма кун-çул пÿртĕр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрÿшĕ, ывăлĕпе кинĕ тата мăнукĕсем.**



Муркаш ялĕнче пурăнакан **Людмила Калистратовна ЕГОРОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн юратса ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, çемьере килĕшÿ сунатпăр. Санăн ăшă кăмăлу çемье валли те, тус-юлташусем валли те çиттĕр. Тавах сире çавăн пек ăшă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра пурне те пулăшма хатĕрришĕн. Ĕмĕрÿ вăрăм та сывлăхлă пултăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, 4 мăнукĕ, сире чунтан хисеплекен Нина аппу.**



Мăн Шаптак ялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Муркаш салинче пурăнакан, нумай çул бухгалтер ĕçне туса пурăннă **Людмила Калистратовна ЕГОРОВА** çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче 60 çул тултарать. Çав ятпа эпир ăна хисеплесе ăшшăн саламлатпăр.

Людмила Калистратовна, пурнăç çулĕ такăр та тумхахсăр чуптăр, ватлăху канлĕ те хуйхăсăр килтĕр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтÿсем пысăк та вырнаçуллă, сывлăху çирĕп те çĕкленÿллĕ пултăр, кăмăлу яланхи пекех çемçе те тарават юлтăр.

**Пысăк салампа Любăпа Анечка.**



Хамăр юратнă аннене, асаннене – Муркаш салинче пурăнакан хаклă сыннăмăра – **Людмила Калистратовна ЕГОРОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, ихсĕлми телей, ăнăçу тата вăрăм кун-çул сунатпăр. Малашне те хăвăн ăшă кăмăлупа, ĕçченлĕхÿпе пире савăнтар. Сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Яланах хальхи пек илемлĕ, савăнăçлă пул, сĕтелÿ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, пур тăванусемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**

Хисеплĕ тус-юлташăмăра – **Роза Юрьевна ВАСИЛЬЕВА** индивидуаллă предпринимателе юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху сирĕн çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, чир-чĕр çывăха ан пытăр. Хăв мĕн ĕмĕтленни çитсе пытăр. Тавах сире ырă кăмăлушăн, халăхшăн тăрăшнăшăн.

**Пысăк салампа: Исаковсен çемйи тата Хорнуй, Мăн Шаптак, Тойкилтĕ, Платкасси ялĕсен çыннисем, сирĕн автобуспа кунсерен çула тухакансем.**



Хаклăран та хаклă, хисеплĕрен те хисеплĕ, хамăрăн чи çывăх çынна – Мăн Шаптак ялĕнче çуралса ÿснĕ **Юрий Алексеевич ГЕРАСИМОВА** 50 çул тултарнă ятпа чĕререн саламласа ырлăх-сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Телейлĕ пул, утас çулу такăр пултăр, пурлăху та, юлташусем те хушăнсах пыччăр.

Чĕрĕк ĕмĕр пурнăçра алă çул...
«Ситрĕм, тăтăм, сисеймерĕм», – терĕн пуль.
Нушине те, савнăçне те куртăн пуль...
Шав усмарăн эс пуçна, хăв çирĕп пуль...
Шăпа янă питĕ йывăр самантрах.
Çирĕп утрăн малалла хăв çулунах.
Сăнунта çаплах илемлĕх çухалман.
Пуçунта хура çÿçÿ пачах юлман.
Кăвакарнă çÿç пĕрчийĕн çийĕнче
Курăнать ăс-хакăл çыннăн çĕр çинче.
Вăрăм ĕмĕр пултăр санăн пурнăçра...
Савнă мăшăр кулли çиçтĕр сан умра!
Ачусем хисеплĕн пăхчăр сан çине!

**Пысăк хисеппе: мăшăрĕ, ывăлĕсем, çывăх тăванĕсем, хурăнташĕсем, юлташĕсем.**

## Объявление

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиками проекта межевания являются: Лебедев Геннадий Герасимович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кюрегаси, ул. Центральная, д. 1. Потрясилова Ольга Анатольевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Сесмеры, ул. Дружная, д. 67. Егоров Ардольон Иванович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Кинярская, д. 4.**

**Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 (ООО «Аршин»). Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37, (филиал ФГБУ «ФКП Росреестр»).**

# Усă курман уй-хире – пусă çаврăнăшне

## Çĕр ыйтăвĕ тавра

2010 çулхи шăрăх çанталăк ял хуçалăхĕнче тăрăшакансене чăтăмлăх енĕпе самай тĕрĕслерĕ. Вырлăх апачĕ çителĕклĕ чухлĕ хатĕрлеме май килмерĕ. Ăна аякран кÿрсе килнипе, патшалăх пулăшнипе вырлăх-чĕрлĕх шучĕ ытла чакмарĕ. Çапла вара кашни лаптăк çĕрпе тухăçлă та вырăнлă усă курмаллине, паянхи кунпа кăна пурăнмалла марринe аван ăнлантăмăр. Ял хуçалăх министрĕ С. Павлов пĕлтернĕ тăрăх кăçал вун ултă регионта шăрăх çанталăк тăрать. Çавна май ял хуçалăх культурин тухăçĕ те планпа пăхнинчен сахалтарах пулас хăрушлăх ума тухать.

Чылайăшĕ ас тăвать пулĕ Чăваш Республикин пĕрремĕш Президенчĕ Н. Федоров усă курман кашни лаптăк çĕре пусă çаврăнăшне кĕртме хушу кăларнăччĕ. Çавна май 2008 – 2015 çулсем валли ку тĕлĕшпе пурнăçламалли ятарлă программа та кун çути курчĕ.

Çапла вара çав тапхăртан пуçласа усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси пуçланчĕ. Ку категорире икĕ е ытларах çул усă курман çĕр лаптăкĕ шутланать. Республика шайĕнче çитес вăхăтра çак ĕçе 29,8 пин гектар çинче пурнăçлама палăртнă.

Асăннă программăпа килĕшÿллĕн ял хуçалăх предприятийĕсене тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсене çак ĕçе вăя кĕртнĕшĕн патшалăх укçа-тенкĕ парса пулăшать. Пусă çаврăнăшне кĕртес ĕç валли республика шайĕнчен 6091, 8 пин тенкĕ, вырăнти бюджетсенчен 6678,7 пин тенкĕ укçа уйăрма пăхнă. Çак хушма çĕр лаптăкĕнчен пĕтĕмĕшле 526 пин тонна тĕш тырă, 850 пин тонна çĕр улми туса илме май пур. Пысăк пахалăхлă кĕрхи культура вăрлăхне çĕр пин гектар çинче акса хăварма палăртнă, кунта çĕнĕрен пусă çаврăнăшне кĕртнĕ уй-хир калăпăшĕ те кĕрет.

Программа шайĕнчи ĕç районта та пурнăçланать. 2009 çулта усă курман çĕр лаптăкĕ районта 3867 гектар пулнă. Иртнĕ çул 841 гектар çинче агротехника ĕçĕсем туса ирттернĕ. Кăçал 658 гектар çĕре пусă çаврăнăшне кĕртмелле. Ку тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕçсем Катькас (281 га), Ильинка (188 га), Ярапайкасси (78 га), Хорнуй (60 га), Çатракасси (51 га) ял тăрăхĕсенче пур. Акас-лартас лаптăка ÿстернин пĕлтерĕшĕ тупăш илессин ÿсĕмĕнче пулмалла.

Хуçалăхсем çак ĕçре тăкакланнин 50 процентне икĕ бюджетран саплаштарăççĕ. Ку тĕлĕшпе республика бюджетĕнчен 173 пин те 099 тенкĕ укçа уйăрнă, çакăн чухлех район бюджечĕ парать. Енчен те манăçа тухнă уй-хире çĕр ĕçченĕ çĕнĕ сăн-сăпат кĕртет пулсан ял пурăнать, малашлăха пăхать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Кун пекки пулманччĕ-ха

# Мăшăрланма – юлан утпа

– Пăхăр-ха, пăхăр, кĕрÿ каччипе çураçнă хĕр юлан утпа, – çаврăна-çаврăна пăхрĕç иртен-çÿренсем кун пеккине курман мăшăр çине. Район администрацийĕ еннелле бантиксемпе илемлетнĕ икĕ юлан ут чыслăн утса пычĕ **(сăн ÿкерчĕкре)**. Вĕсем çинче вара алран-алла тытăнса пулас мăшăр Колесниковсем тата свидетельсем ларса пычĕç. Лашапа утланса çÿренинчен тĕлĕнмеллиех çук темелле ĕнтĕ, анчах та çырăнма ЗАГСа юлан утпа!.. Кун пекки пулманччĕ-ха.



Мăшăрланассин церемонине юланутпа каяс шухăш пулас упăшкана пырса кĕнĕ: çав куна вăл ытти кунсемпе танлаштарсан урăхларах асра хăварас тенĕ. Çитменнине вăл пурăнакан çуртран ЗАГС патне çитме инçе мар.

– Манăн тăвансен хăйсен лашасем пур. Вĕсем пире хăйсен янаварĕсемпе тивĕçтерме килĕшрĕç, – каласа парать Павел. – Лашисем лăпкăскерсем, нимĕнле кĕтмен-туман лару-тăру та сиксе тухма пултарайман.

Йăлана кĕнĕ тăрăх туй машинисене хăюсемпе, çĕрĕсемпе тата чечексемпе илемлетеççĕ. Анчах та лаша çине чечек çыххи çакса яраймăн, çĕрĕсем çыпăçтараймăн. Çавăнпа та лашасен çилхисене ылтăн тĕслĕ хăюпа, урисене шăнкăравсемпе илемлетнĕ. Мăшăрланакансене курма халăх Муркашра чылайăн пухăнчĕ.

Çураçнă хĕр валли туй кĕпине вара пулас хунями хăй çĕлесе панă.

Мăшăрланнин церемонийĕ хыççăн çапах та Колесниковсем лашасене автомашинăсемпе улăштарчĕç. Апла пулин те вĕсем лашасенчен хăпма шухăшламаççĕ. Халех ĕнтĕ малашне хăйсен ачисене лаша спорчĕпе туслаштарма тĕв тăваççĕ.

**Н. КОРНЕЕВА,**
**район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ.**

# Бизнес-инкубатор тулли хăватпа ĕçлетĕр

## Пĕчĕк предпринимательство

***Районта 139 пĕчĕк тата вăтам предприяти, 798 уйрăм предпринимательсем, вăл шутра 113 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, 10 ахăн ял хуçалăх потребитель кооперативĕ вăйра тăрать. Вăтам тата пĕчĕк предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕпе 2500 яхăн çын е район экономикинче вăй хуракансен 32, 6 проценчĕ çыхăннă.***

***Харпăр хăйне çак ĕçпе çыхăнтарас тĕллевлисене районта усăллă бизнес-инкубатор пулăшма хатĕр. Чи малтанах унăн витĕмĕ 2008 çулта пуçланнăччĕ.***

***Пуçаруçăсемшĕн тĕрĕс те кирлĕ информацие консультацие вăхăтра илни тата ку ĕçре пĕччен вăй çителĕксĕр пулнине тĕпе хурса правительство шайĕнчен тимлĕх тата пысăк пулăшу уйăрчĕç. Çавна май 2011 çулта вара бизнес-инкубатор çĕнĕ çурчĕ çĕкленчĕ, унăн ĕç калăпăшĕ те самай анлăланчĕ. Ăна тĕпрен çĕклеме федераллă бюджетран 11 миллион та 300 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 2 миллион та 847 пин тенкĕ уйăрчĕç. Паянхи кун тĕлне еплерех улшăну тата çĕнĕлĕх пуррипе кăсăкланас тĕллевпе эпĕ кунти ĕçе йĕркелекен Е. СУББОТИНПА калаçрăм.***

– Асăннă объектăн тĕп тĕллевĕ – харпăр хăй ĕçне пуçарас текенсене аталану çулĕ çине тăма пулăшасси. Чи малтанхи тĕрев вĕсемшĕн питĕ кирлĕ.

Çакăнта вырнаçса ĕçлес текенсем валли конкурс ирттертĕмĕр, кашнин проектне уйрăммăн тишкертĕмĕр. Пĕрремĕш тапхăрта Ю. Матросов (фотоплиткăсем хатĕрлекен мини-цех), С. Ершов (тимĕр изделие порошокпа сăрласси), "Юлия" чикĕллĕ яваплăхлă обществo (ача-пăча çи-пуçĕ çĕлесси, сутасси), "Народные промыслы – чувашский терем" чикĕллĕ яваплăхлă общество (ландшафт дизайнĕ, макет хатĕрлесси) ĕçе пуçăнчĕ.

Конкурсăн иккĕмĕш тапхăрĕнче С. Бочкин (сапан хатĕрлесси), "Металл – строй" чикĕллĕ яваплăхлă общество (тимĕр изделисем ăсталасси), "Мастер-Сити" чикĕллĕ яваплăхлă общество (çĕвĕ ĕçĕ) проекчĕсене пăхса тухнă.

**– Апла пулсан бизнес-инкубатор тулли хăватпа тимлет тесе çирĕппĕнех калама пулать?**

– Паллах, апла калама иртерех-ха. Кунти ĕçе тивĕçлĕ шайра йĕркелес тĕллевпе конкурсăн виççĕмĕш тапхăрне те ирттерме палăртнă. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ августăн 20-мĕшĕнче пулмалла.

**– Паянхи кун тĕлне татах миçе пуçаруçăна хапăл тăватăр?**

– Çитес вăхăтра тăватă производство тата пилĕк офис пÿлĕмне ĕçлеттермелле. Енчен те пире патшалăх шайĕнче пысăк пулăшу кÿчĕç пулсан, унпа пирĕн тулли усă курмалла.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх унти офис техники те паянхи кун ыйтăвне тулли тивĕçтерекенни, паха йышши?**

– Çапла, йăлтах çĕнĕ йышши оборудовани. Паянхи кун тĕлне 15 комплектран 6-пе усă куратпăр, ытти 9-шĕ вара пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсем кунта вырнаçнă çемĕн ĕçлĕç.

**– Паянхи çамрăксем бизнес-инкубатор ĕçне кирлĕ пек ăнланаççĕ-и?**

– Çителĕксĕртерех пулĕ. Вĕсене чи малтан харпăр хăйне шанмалăх туйăмĕ иккĕлентерет тесе шутлатăп. Çавăнпа та ку енĕпе ĕçлеме кăштах та пулин тĕллев лартнисен хăрамалла мар, пирĕн пата килсе калаçмалла. Пирĕн консультаци яланах вырăнлă пулĕ.

**Р. МАКАРОВА калаçнă.**

# Тĕрĕслев пуçланчĕ. Шкулсем хатĕр-и?

**Вĕрентӳ**

***Ĕнертен пуçласа районти вĕрентӳ учрежденийĕсем вĕренӳ çулне хатĕррине тĕрĕслекен комисси хăйĕн ĕçне тытăнчĕ.***

Аса илтеретпĕр, шкулсенчи юсав ĕçĕсене пурнăçласси икĕ программăпа пулса пырать. Пĕрремĕшĕ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тытăмне çĕнетессин комплекслă мерисене пурнăçлассипе çыхăннă. Çак программăпа юсав ĕçĕсене пурнăçлама укçа-тенкĕ федераллă тата вырăнти бюджетсенчен куçать. Ку программăпа пăхса хунă юсав ĕçĕсем Муркашри, Нискассинчи, Москакассинчи вăтам тата Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулсенче вĕçленмен-ха. Район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх ĕçсене августăн 15-мĕшне вĕçлеме палăртнă. Çак пысăк ĕçсене туса ирттерме пурĕ 8 миллион та 783 пин тенкĕ уйăрнă, вăл шутра вырăнти бюджетран – 1 миллион та 756 пин тенкĕ.

Тепĕр программа – пилотлă программа: «Ял тăрăхĕсенчи комплекслă компактлă застройка». Ăна республика тата вырăнти бюджетсенчен финансласçĕ. Çав программăпа пăхса хунă укçа-тенкĕрен Катькасри пуçламăш шкул-ача садĕнче тата Юнкă ял тăрăхĕнчи «Рябинушка» ача садĕнче юсав ĕçĕсене пурнăçланă. Ку программăпа юсав ĕçĕсене пурнăçлама пурĕ 2 миллион та 502 пин те 200 тенкĕ палăртнă, вĕсенчен 1 миллион та 251 пин те 100 тенкĕ – вырăнти бюджетран.

Кунсăр пуçне тата ятарлă программăпа шкулсенчи апат блокĕсене оптимизацилесси те пырать. Унпа килĕшӳллĕн Муркашри вăтам шкул столовăйне тĕпрен юсаса çĕнетеççĕ. Хальхи вăхăтра столовăй валли оборудовани туянма аукцион ирттереççĕ. Ятарлă хушупа Муркашри вăтам шкулти столовăя юсама 940 пин тенкĕ ытла уйăрса панă, унта валли сĕтел-пукан туянма – 350 пин тенкĕ ытла.

Маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, Муркашри вăтам шкулта «Доступная среда» федераллă программăпа пăхса хунă ĕçсем те пурнăçланаççĕ. Шкулта халĕ сывлăх тĕлĕшпе сахалтарах майсемлĕ ачасем валли кирлĕ условисем тăвассипе тимлеççĕ. Оборудование туянассине аукцион урлă ирттереççĕ.

Ытти вĕрентӳ учрежденийĕсенче çулсеренех ирттерекен вак-тĕвек юсав ĕçĕсене пурнăçланă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Çветтуй Илия пророк кунĕ

**Православи уявĕсем**



Илия пророк – Çӳлти Патшалăх чĕррĕн йышăннă пĕртен-пĕр пророк. Вăл питĕ çирĕп пророк шутланать.

Кивĕ Сăмахăн (Старый завет) пророкне – Илия пророка – Çĕнĕ Сăмах та сума суса йышăннă. Çакна Лука çырнă таса Евангелири сăмахсем те çирĕплетеççĕ: «...Çавăнтах Унпа пĕрле икĕ çын калаçса тăнă, вĕсем Моисейпе Илия пулнă: вĕсем, чаплăн курăнса, Вăл Иерусалимре юлашкинчен мĕн тăвасси çинчен калаçнă». Çак ĕç-пуç Иисус Христос Турă çĕнелсе улшăннă кун пулнă.

Илия пророк кунĕ православи тĕнне ĕненекенсен çуллахи пысăк уявĕсене вĕçлекен уяв шутланать. Çак кунăн хăйĕн историйĕ.

Израильте висĕ çул таранах çумăр çуман. Выçлăх пулнă. Турра ĕненекенсем Кармил тăвĕ çине пухăнса вăкăр пуснă. Илия пророк Турра кĕл тунă та, Турă çĕр çине çумăр çутарнă. Пĕтĕм çĕр çинче çимĕç пулма пуçланă.

Илия пророк нумай çул Израиль халăхĕшĕн тăрăшнă. Тĕлĕнтермĕшсем нумай тунă. Кирлĕ вăхăтра çумăр та çутарнă, халăха чăн Турра ĕненме çирĕппĕн йыхравланă. Турă хăвачĕпе вăл вутлă лашасем кӳлсе, вутлă урапапа пĕлĕт çине çĕкленнĕ **(сăн ӳкерчĕкри тураша пăхăр)**. Çавăн чухне аслати кĕмсĕртетни илтĕннĕ. Аслати авăтни те Илия пророкпа çыхăннă. Аслати кĕмсĕртетнипе çынсем çӳлти Турă пуррине пĕлнĕ. Çавăнпа ĕнтĕ аслати авăтнă чухне çынсем яланах Турра асăнса пуççапнă.

Августăн 2-мĕшĕнче ĕлĕкех Ильинкăри чиркӳ хăйĕн престол уявне паллă тунă. Турра ĕненекенсем Илия пророка чысланă. Кăçал та унта питĕ чаплă уяв ирттерме хатĕрленеççĕ. Тренккăран Ильинкăна турăшсемпе çула тухассине палăртнă, Тренккăри юрăпа ташă ансамблĕ, Шупашкарти хăнасем те концертпа савăнтарĕç, ытти тĕрлĕ савăнăç та пулĕ уява пухăннисем валли.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. 1200000 руб. Торг. Тел.: 8-919-653-15-53.**

* * *

**Сдаю комнату на 2 месяца в г. Чебоксары по ул. Привокзальная. Тел.: 8-960-304-55-40.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 14-20.**

**Требуются водители с личным автомобилем для работы на такси в Моргаушском районе.**
**Тел.: 8-937-370-44-77. 1-2.**

* * *

**Утерянный аттестат А № 0032565, выданный Чуманкасинской средней школой в 2009 году на имя Ивановой Олеси Николаевны, считать недействительным.**

* * *

**Çулталăк та тăвату уйăхри чупнă тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-993-63-50.**

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.**
**Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 4-12.**

* * *

**Пахчари утă сутатăп. Пĕр машина пулать. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-905-342-57-91.**

* * *

**Большесундырскому райпо срочно требуется электрик, с группой допуска. Обращаться в отдел кадров райпо, телефон: 69-5-46. 2-2.**

## Прогноз погоды

| | среда 1 августа | | | | четверг 2 августа | | | | пятница 3 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | **+17** | **+23** | **+26** | **+22** | **+18** | **+26** | **+27** | **+23** | **+17** | **+22** | **+24** | **+18** |
| Давление мм | 747 | 748 | 747 | 747 | 747 | 748 | 748 | 749 | 750 | 751 | 750 | 750 |
| Влажность % | 93 | 67 | 60 | 81 | 87 | 63 | 61 | 65 | 75 | 56 | 49 | 69 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 2 | 2 | 1 | 3 | 4 | 3 | 4 | 3 | 3 | 2 |
| | С | Ю | Ю-З | З | З | Ю-З | З | С-З | С | С | С-З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 04:58 | 20:59 | | | 05:00 | 20:57 | | | 05:02 | 20:55 | |
| Луна восход / заход | | 20:04 | 04:03 | | | 20:28 | 05:26 | | | 20:47 | 06:48 | |

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
КИРПИЧ
ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ
более 500 видов
Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

**Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пăруламалли тынашки сутатăп. Муркаш ялĕ.**
**Тел.: 8-905-346-23-39.**

* * *

**Февралĕнче пурăламалли хура-шурă тынашки сутатпăр.**
**Тел.: 8-927-866-63-92.**

* * *

**Çур çулхи ăратлă качака такисем сутатăп.**
**Тел.: 8-919-657-29-83. 1-2.**

# Владимир Михайлович РУБЦОВ



2012 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче пирĕн ĕçтешĕмĕр, район аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшнă Владимир Михайлович Рубцов пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

В.М. Рубцов 1951 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Нискасси ялĕнче çуралнă. 1969 çулта Нискассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн тӳрех Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ. 1974 çулта вăл инженер-механик дипломне алла илет. Çамрăк специалист институт хыççăнах Совет Çарне каять. Службăра тăнă хыççăн «Сеятель» хуçалăхра инженер-механикра, тĕп инженерта ĕçлет. Унтан (1975–1984 çулсем) асăннă хуçалăха ертсе пырать.

Пултаруллă та пуçаруллă ертӳçĕне районта та асăрхаççĕ. 1984 çулта Владимир Михайловича районти ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ пулма çирĕплетеççĕ. Тепĕр 2 çултан ăна (1986–1988 çулсем) Муркаш РАПОне ертсе пыма шанаççĕ.

В.М. Рубцов халăхпа пĕр чĕлхе тупма, ĕçе йĕркелеме пĕлетчĕ, кирек епле ыйтăва та мала пăхса татса пама тăрăшатчĕ. Çавăнпах ĕнтĕ 1988 çулта ăна райĕçтăвком председательне лартаççĕ. Тепĕр 2 çултан, 1990 çулта, Владимир Михайлович Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ пулса тăрать. 1994 çулччен ертсе пырать вăл района. Хăйĕнчен çирĕп ыйтнипе пĕрлех ыттисенчен те ĕçе яваплăха туйса пурнăçлама ыйтатчĕ, пуçланă ĕçе яланах вĕçне çитеретчĕ.

1994–2003 çулсенче Владимир Михайлович «Чувашсетьгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн «Моргаушрайгаз» филиалĕн директорĕнче ĕçленĕ. 2004-2006 çулсенче – «Чувашсетьгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн «Моргаушрайгаз» филиалĕн директорĕн çумĕнче. Ун хыççăн «Чувашрегионгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Етĕрнери территори участокĕн Муркашри абонент пункчĕн мастерĕнче вăй хунă.

Владимир Михайлович, кирек епле ĕçре вăй хурсан та, умри тĕллеве пурнăçлатчĕ. Вăл обществăлла ĕçре питĕ хастарччĕ: ăна ЧР Аслă Совечĕн 12-мĕш созыври депутатне суйланă, темиçе хутчен те депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ пулнă.

Районăн экономика пурнăçĕпе социаллă аталанăвĕнче В.М. Рубцов тӳпи пысăк. Вăл тунă, вăл ертсе пынипе тунă ĕçсем паян та общество пурнăçĕнче курăмлă вырăн йышăнаççĕ.

Тăрăшуллă ĕçĕшĕн В.М. Рубцова «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă (1987ç.).

В.М. Рубцовăн район аталанăвĕшĕн тунă ырă ĕçĕсене эпир манмастпăр. Унăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Район администрацийĕ, депутатсен районти Пухăвĕ, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, хуçалăх ертӳçисем, пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем.**

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ 1988 – 1990 çулсенче райĕçтăвком председателĕнче, 1990 – 1994 çулсенче район администрацийĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ

**Владимир Михайлович РУБЦОВ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр коллективĕ кунта тĕп бухгалтерта ĕçлекен Е.С. Егоровăн

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланса пĕлтерет.

Администрация Чуманкасинского сельского поселения и коллектив МБУК «Чуманкасинский информационно-культурный центр» выражают искреннее соболезнование семье и близким в связи с преждевременной кончиной

**МИХАЙЛОВОЙ Галины Геннадьевны.**

Коллектив Большесундырского райпо выражает глубокое соболезнование кладовщику центрального склада Михайловой Э.В. в связи с тяжелой утратой – смертью мужа

**МИХАЙЛОВА Алексея Тометьевича.**

Чăваш Республикин «Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци» бюджет учрежденийĕн коллективĕ Отарккăри ветеринари участокĕнче нумай çул ĕçленĕ

**Галина Геннадьевна МИХАЙЛОВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 31.07.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4629.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.